ÇЫНСЕМ ИРĔКЛĔ, ПĔР ТАН ÇУРАЛАÇÇĔ > 6 стр.

Çĕнĕ ШУПАШКАР районĕ хули
ТВ программа
Гороскоп
www.tavan-en.cap.ru

Шупашкар ЕН хаçачĕ




# ТĂВАН ЕН

Хаçат 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă
142-143 (9737-9738) №№ ✵ 2009 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 11-мĕшĕ. Эрне кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## *Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!*

***Сире пурне те Раççей Конституцийĕн кунĕпе ăшшăн саламлатăп.***

***Паянхи Конституци – Раççей патшалăхĕн демократиллĕ аталанăвĕн çирĕп никĕсĕ. Кашни гражданинăн Конституцие пĕлмелле, хисеплемелле. Тăван Çĕршывăмăр пирĕн пурин те пĕрре. Эпир гражданин тивĕçлĕхне çирĕплететпĕр, вăй-хал туптатпăр, çутă малашлăх пуласса шанатпăр. Раççее çĕнетес, унăн историпе культурине упрас тата пуянлатас енĕпе кашни ентеше кулленхи ĕçре малашне те тăрăшса ĕçлеме сĕнетпĕр.***

***Тĕрĕслĕх, ыркăмăллăх, тăрăшулăх, ăнланулăх тата туслăх яланах малти вырăнта пултăр. Çакă патшалăха çĕнетме май паракан тĕп вăй пулса юлĕ.***

***Кашни çемьене тăнăç пурнăç, килĕшӳпе тату пурнăç, халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетсе пыма ăнăçу, тăван çĕршыва аталантарассишĕн ырă ĕçсемпе çитĕнӳсем тума иксĕлми хавхалану сунатăп.***

***Уяв ячĕпе пурне те!***

**А.КНЯЗЕВ,**
**Шупашкар район пуçлăхĕ.**

## РЕСПУБЛИКĂРА

### Сахал укçа хывсах

Декабрĕн 9-мĕшĕнче республика Президенчĕ Н. Федоров Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ. Унта пăхса тухнă ыйтусен шутĕнче çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх комплексĕ валли техника туянма федераллă бюджетран килекен субсидие районсене валеçни те пулнă.

Лайăхпа Президент улатăрсене палăртнă. Республикăна тивĕçнĕ 62,6 млн. тенкĕрен 40 млн. тенке яхăн Улатăра каять. «Хăйсем енчен сахал укçа хывсах проблемăсене татма, хуласемпе районсене тасарах та илемлĕрех тума май пуррине муниципалитетсен ытти пуçлăхĕсем мĕншĕн ăнланмаççĕ?» – тенĕ ларура республика ертӳçи.

### Ĕç ыйтăвĕ – тĕп вырăнта

Ĕçе вырнаçтарма пулăшмалли тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн кăçал 39 пин ытла çынна вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ, 5 пин ытла çынна маларах вĕренме янă, патшалăх пулăшнипе ĕççĕр 1180 яхăн çын хăйĕн бизнесне йĕркеленĕ. Министрсен Кабинечĕ Республикăн 2010 çулта Чăваш Республикинчи ĕçлев рынокĕнчи çивĕчлĕхе чакармалли тĕллевлĕ программине йышăннă. Çак тата ытти пирки ку эрнере Чăваш Ен Президенчĕ Н. Федоров Раççей Правительствин Председателĕн çумĕ А. Жуков чĕннипе регионсен ертӳçисемпе ирттернĕ видеоконференцире каласа кăтартнă.

## ШУПАШКАРТА

### Çĕнĕ çул ярмăркkисем

Декабрĕн 10-31-мĕшĕсенче Шупашкарта çĕнĕ çул ярмăрккисем ĕçлĕç. Ярмăрккăсем пурĕ 46 вырăнта пулĕç. Çавсен шутĕнче Ленинла Комсомол, Университет, Энтузиастсен, Мичман Павлов урамĕсем, Эгер бульварĕ, Трактор тăвакансен тата Мускав проспекчĕсем.

Кун йĕркинче

# Приватизаци вăхăчĕ иртсе пырать

**«Хваттерте пурăнмастăп эпĕ. Общежитинче пĕчĕк пӳлĕм кăна. Çавăнпа приватизацилес тесе хускалмасăр чылайччен пурăнтăм. Анчах халĕ пăхатăп та, пирĕн общежитинче пурăнакансем пĕри те тепри кускалать кăна. Аптăрасах кайрăм. Мĕн тумалла-ши? Эс мĕнле шухăшлатăн?» – аптăраса калаçрĕ юмаха килнĕ тусăм.**

Паллаканăм пек аптăракансем татах пуррине çак уйăхăн пуçламăшĕнче Кӳкеçри «БТИ» муниципаллă предприятире пулнă хыççăн тепĕр хут курса ĕнентĕм. «Ун пек те, кун пек те шухăшласа пăхрăм. Пĕрисем приватизацилеме сĕнеççĕ, теприсем приватизацилемесен лайăхрах теççĕ. Халĕ, ав, виççĕмĕш хутĕнче, килесех терĕм», – калаçать БТИне пынă пенси çулĕсенчи хĕрарăм.



«Приватизацилес текенсем 17 çул хушшинче пирĕн пата çитме пултарнах. Юлнисем – е приватизацилессипе пĕрпĕр йывăрлăх пуррисем, е ĕçе кен çемьесем. Тăкакланмасăр пулмасть-ха, анчах кашни уйăхра 200-шер тенкĕ пухса пырсан та хальччен пуçтарăнатчĕ», – тет «БТИ» муниципаллă предприяти директорĕ Н. Н. Ермакова приватизаци районта епле пыни пирки сăмах пуçарсан.

### Черетре – 3-4 çын

Аса илтерер, çурт-йĕре харпăрлăха куçармалли, тепĕр майлă каласан, приватизацилемелли, вăхăт нумай юлмарĕ. Çав кун килес çулхи мартăн 1-мĕшĕнче вĕçленет.

Шупашкар хулинче çынсем БТИне черете талпăнни пирки пĕлтерет те «Советская Чувашия» хаçат, пирĕн патра ун пек мар тет Надежда Николаевна. Черетре виç-тăват çынтан ытла пухăнмасть те, кăнтăрла хыççăн халăх çукпа пĕрех иккен. Эпир БТИре иртнĕ эрне пуçламăшĕнче, кăнтăрла иртни икĕ сехетсенче, пулнăччĕ. Виççĕн черетре тăратчĕç, иккĕн сĕтел хушшинче ларатчĕç.

Хаçатăн 6-мĕш страницинчи таблица районта приватизаци епле пынине аван кăтартса парать. Ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пухнă вăл цифрăсене.

### Йывăрлăхсăр мар

Приватизацилеме тăрсан йывăрлăхсем те сиксе тухаççĕ. Çавăн пек тĕслĕхсене «СЧ» хаçат декабрĕн 3-мĕшĕнчи номерте лайăх ăнлантарса панă. Калăпăр, çемье членĕсенчен пĕри маларах урăх çĕрте приватизацие хутшăннă пулин те халь пурăнакан вырăнта хăйĕн çемье членĕсене ура хурать. Кун пек чухне суда тавăçпа (иск) тухсан кăна.

Тепĕр кăткăслăх – çын ордерта шутланса тăрать, анчах урăх çĕрте регистрациленсе пурăнать.

ВĔÇĔ > 6 стр.

## Президент санăн шухăшна кĕтет

**Чăваш Ен Президенчĕ хальхи вăхăтра Патшалăх Канашĕ тата республика халăхĕ ячĕпе черетлĕ Çыру (Послани) хатĕрлет.**

**Президент Çырăвĕ – республикăра мĕн-мĕн туса ирттернине хаклакан, малашлăха палăртакан тĕп документ. Вăл – ĕç тумалли тĕп инструмент: Правительство, Патшалăх Канашĕ, вырăнти влаçсем, бизнес-структурăсем çитес çул ăна таянса ĕçлĕç.**

**Çырăва хатĕрленĕ чух усăллă мĕн пур шухăша шута илме тăрăшаççĕ. 2010-мĕш çулхи Çырăва Эсир мĕн кĕртнĕ пулăттăр? Республикăра пурăнакансен пурнăçне лайăхлатас тесе мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

**Сирĕн сĕнĕвĕрсене çак адреспа кĕтеççĕ: Шупашкар хули, Республика площачĕ, Правительство çурчĕ, e-mail: analit2@cap.ru. Телефонпа та шăнкăравлама пулать: (88352) 39-35-73 тата 39-35-75.**



## Подписка – 2010

### Хаксем (I çур çула)

*Тăван Ен*

| | |
|---|---|
| Редакцире илсе тăмалла | 105 т. |
| **Редакцирен** киле е ĕçе пырса памалла | 150 т. |
| "Чăвашпичет" киоскĕсенче | 126 т. |
| Почтăра, почтальонсенче | 187 т. 20 пус |

*Кугеси плюс*

| | |
|---|---|
| Редакцире илсе тăмалла | 105 т. |
| **Редакцирен** киле е ĕçе пырса памалла | 150 т. |
| "Чăвашпичет" киоскĕсенче | 126 т. |
| Почтăра, почтальонсенче | 154 т. 38 пус |



## *"Тăван Ен" – тăван хаçат: мĕн лайăх, мĕн япăх?*



**Галина МОЧАЛОВА, библиотека заведующийĕ, Пархикасси:**

– Районти паллă çынсен паллă кунĕсем çитсен – çуралнă кунĕ, юбилейĕ, вилнĕ кунĕ – статьясем çырсан аван пулмалла. Хамăр таврари çынсем пирки Т. Верендеева çырнă статьясене чи малтан вулатпăр.



**Леонид ПАВЛОВ, педагог-ветеран, Чăрăшкасси:**

– Вăрçă çулĕчченех ку хаçата çырăнса илеттĕм. Кăçал хаçат пур енчен те урăхланчĕ, содержани енчен пушшех те. Мăшăр канашсене касса илсе пуçтарса пырать. Ĕлĕкхи пурнăçа çырнине ытларах курас килет.

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

| | | | |
|---|---|---|---|
| **Эрне кун,** декабрь, 11 | **Шăмат кун,** декабрь, 12 | **Вырсарни кун,** декабрь, 13 | **Тунти кун,** декабрь, 14 |
| кăнтăрла -10, çĕрле -12 | кăнтăрла -10, çĕрле -12 | кăнтăрла -9, çĕрле -9 | кăнтăрла -6, çĕрле -18 |
| Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк. | Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк. Юр çăвать. | Юр е çумăр çăвать. | Улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк. Юр е çумăр çăвать. |

**Декабрĕн 11-мĕшĕнчи валюта курсĕсем** $ 30,63 € 45,07

Укçа-тенкě

# Район бюджетěнче – улшăну

**Кăçалхи çула Шупашкар район бюджечě 13,1 млн. тенкě дефицитпа вěçлемелле. Çакăн пек прогноз пирки пěлтерчě райадминистрацин финанс пайěн пуçлăхě Неонилла Никифорова Депутатсен районти пухăвěн декабрěн 4-мěшěнчи ларăвěнче. Кăçал район хыснинче пурě 564,8 млн. тенкě тупăш пухăнмалла, тăкаксен виçи 577,9 млн. тенкěпе танлашмалла.**

Декабрьти улшăну тăрăх, уйрăм çынсен тупăшěнчен илекен налог виçи 12 млн. тенке яхăн чакать. Тупăшсен пайě ытти хăшпěр налогпа та сахалланмалла. Пурлăх тата пурлăх мар активсене сутса тупăш курнине илсен, ял тăрăхěсенче вырнаçнă çěр участокěсене сутнипе пайта курасси малтан палăртнинчен 762 пин тенкě; ытти хăш-пěр статьяпа та хушăнмалла. Предпринимательство тата тупăш кўрекен ытти ěç-хěле пула пайта илесси 2,1 млн. сахалланать.

Çамрăк çемьесене хваттерпе тивěçтерме района уйăракан субсиди виçине 67,6 пин тенкě катнă. Района килмелли субвенци виçине те сахалланă, пурě – 4,5 млн. тенкěлěх.

Декабрьте тунă йышăну тăрăх, кăçалхи бюджетăн тупăшсен пайě пěтěмпе 1,1 млн. тенкě сахалланать.

**Т.ИВЕРИНА.**

Ăшши-пăшшипе

# Ватасса – вататпăр, юсасса – юсамастпăр...

Çакăн пек пăшăрханупа шăнкăравларěç иртнě кěçнерни кун редакцие Кўкеçре вырнаçнă СССРа 50 çул урамран. Асăннă урамра пурăнакансем, 10 çурта яхăн, канализаци тунă. Вулаканăмăр калашле, питě лайăх ěç. Анчах çавăн чухне çула ватма тивнě вырăнсене йěркене кěртмесěр хăварнă.



«Влаçсенчен ыйтатпăр-ха, анчах пуррине те вататпăр, хамăр хыççăн юсамастпăр. Хамăр урамсемпе лайăхпа та калаçса пăхнă, хускаласшăн мар. Паллă чăваш эстрада çăлтăрě, хăй джиппа çўрет те, пирěн джип мар, машина кěрсе тухаймасть тесен «Эсир те джип туянăр» тесе хуравларě. Çула ватнă хыççăн юсаманнипе тěрлě çěре çырса ятăмăр. Явап тыттарттарассишěн мар, хăйсем хыççăн çынсем йěрке туччăр тесе», – пăшăрханса калаçрě çав урамра пурăнакансенчен пěри.

Çак кунсенче вара çула йěркене кěртнě. Ěнер хамăр кайса пăхрăмăр, çула ватнă пилěк вырăнта вак чул сарса хытарнине курса ěнентěмěр.

**В.ТИТОВА.**

Ял хуçалăхě

# Агропромпарк – ялти бизнес малашлăхě

**Пěчěк бизнеса ялта та аталантармалла, анчах ун валли майсем туса памалла. Çакăн пирки калаçнă декабрěн пуçламăшěнче иртнě РФ Ял хуçалăх министерствин коллегийěн анлă ларăвěнче.**

Майсем тесе асăннă федераллă министерствăн пуçлăхě Елена Скрынник чи малтанах законодательство пирки каланă. Кунта сăмах, тěпрен илсен, пěчěк предприятисене налог хурса парасси тата çěрпе усă курассин ыйтăвěсем пирки пырать. Пěчěк агробизнес предприятийěсене кредит учрежденийěсенчен кивçен укçа илме те çăмăл мар.

Республикăн Ял хуçалăх министерстви хăйěн сайтěнче пěлтернě тăрăх, чи кирли – пěчěк предпринимательсене продукци тата пулăшу рынокěнче регионсенче тата регионсем хушшинче çул усça парасси. Çěршывěпе туса илекен ял хуçалăх продукцийěнчен пěчěк формăллă хуçалăхсене паянхи кун çурри ытла тивет. Çав шутра аш-пăшпа сěт – 50 % ытла, çěр улмипе – 88 %, пахча çимěçпе – 78 %.

Ялта пěчěк бизнеса аталантармалли çул-йěре агропромпарксем йěркеленинче курăççě. Мěн япала-ха вăл? Хальлěхе ун пирки усăмлăн калама йывăртарах пулин те агропромпарксен учредителěсем фермерсем (фермерсен тенине, ахăртнех, кунта анăçри хăш-пěр çěршыври пек анлăрах йышăнмалла: унта фермерсем шутне ял хуçалăх енěпе тимлекен мěн пур категориллě хуçалăхсем кěреççě. – **Авт.**) хăйсем пулмалла. Агропромпарксем продукцие хăйсемех тирпейлěç, вěсенче логистика центрěсем ěçлěç, ваккăн тата курттăммăн сутмалли пасарсем, складсем, транспорт служби пулě. Анлă профильлě специалистсене те агропромпарксенче хатěрлемелле. Кунсăр пуçне машинăпа трактор станцийěсем, бизнес-центрсем, информаципе консультаци пункчěсем тата обществăлла инфраструктура объекчěсем пулмалла. Агропромпарксем пысăк агрохолдингсемпе суту-илў сечěсемшěн конкурентсем пулса тăрасса шанаççě.

Çěнě йышши çав предприятисене Раççейěн çичě регионěнче: Мордва Республикинче, Белгород, Тамбов, Томск, Липецк тата Астрахань облаçěсенче тата пирěн Чăваш Енре – йěркелесшěн.

**В. ЭВЕРККИ.**

Хаçатра çырнă хыççăн

# «Пирěн ялта ěçекен çын çук»

– Декабрěн 4-мěшěнче «Йывăр сумка йăтса почтальон васкать хуларан яла...» статьяра пире айăплаcа çырнă пек туйăнчě, – çаппа пěлтерчě пěр кунхине редакцие кěрсе Котеркасси фольклор çурчěн заведующийě Н. Н. Михайлова. – Почтальонка хаçатсене ирпе салатать. Паллах, вăл вăхăтра клуб усă мар. Эпě ěçлемен пек пулса тухнă статья тăрăх. «Тăван Ен» тата ытти хаçатсене пире Туткаркасси ял тăрăх администрацийě çырăнса парать», – терě Надежда Николаевна.

– Библиотека валли те халě хаçат çырăнма укçа уйăраççě, – хушса хучě унпа пěрле килнě Н. В. Аркадьева, Толик Хураски библиотекин заведующийě.

Н. Н. Михайлова тата Котеркассисене хўтěлесе калаçрě: «Пирěн ялта ěçекенсем нумай тесе çырнă. Ун пеккисем, чăнах та, пурччě малтан, анчах халě вилсе пěтрěç. Чылайăшě ялти çуртсене дача пек усă курать. Хăйсем Çěнě Шупашкарта пурăнаççě. Почта пуçлăхě Л. Н. Гукова Çěнě Шупашкартан, вăл пирěн ялсене палламасть те çавнашкал калама», – терě.

**А. ИЗМАН.**

Çěнěлěх

# Тулаш реклама – аукционпа

Муниципаллă харпăрлăхри çурт, куçман ытти пурлăх е çěр участокě çине тулаш (наружная) реклама вырнаçтарма тата çавна тытса тăракансене хаклашса (вырăсла каласан, через торги) палăртěç. Хаклашнин шутне аукцион, конкурс тавращě кěрет. Кун пирки Депутатсен районти пухăвěн декабрěн 4-мěшěнчи ларăвěнче йышăнчěç.

Анчах рекламăна вырнаçтаракансене хаклашмасăр суйлама юракан самантсем те пур. Кун пеккисен шутне районшăн социаллă пěлтерěшлě реклама элеменчěллě оборудовани (урамри сехет, таксофон кабини, чарăну павильонě, хăтлăх кўрекен ытти япаласем), вăхăтлăх (çулталăкран ытла мар) реклама конструкцийěсем (строительство сетки, стройплощадкăсен, сут-илў вырăнěсен хўми...) вырнаçтарни кěрет.

Тулаш реклама вырнаçтаракансене палăртма аукцион е конкурс ирттерес умěн массăлла информаци хатěрěсенче тата Шупашкар район администрацийěн официаллă сайтěнче пěр уйăхран кая юлмасăр пěлтермелле.

**В.АВЕРКИЕВА.**

Пенси укçи

# Инвалидсен пенси йěрки улшăнать

**Кăçалхи июлěн 24-мěшěнче йышăннă 213-мěш федераллă законпа килěшўллěн, килес çулхи январěн 1-мěшěнчен инвалидсене пенси шутласа парас йěрке улшăнать.**

*Инвалидсене пенсие инвалид ушкăнне кура мар, ěçлеме пултарайманнин степеньне кура палăртмалла.*

Килес çултан кунсăр пуçне тепěр улшăну та пур: *инвалида пула ěç пенсийě илекенсене пенси çулне çитсен ватлăхпа илекен ěç пенсийě пама пуçăнмалла.* Стаж çителěксěр пулсан, инвалида пула паракан ěç пенсине тўлесе пырас вăхăта тепěр пилěк çуллăха тăсаççě, унтан социаллă пенси шутласа параççě. Кун валли заявлени çырни кирлě мар. Ватлăхпа илекен ěç пенсийě тата социаллă пенси виçи инвалидноçа пула илекен пенси виçинчен пěчěк пулмě. Инвалид пирки паракан мěн пур çăмăллăхпа тўлев вара сыхланса юлě.

*Ěç пултарулăхěн (трудоспособность) степеньне палăртман III ушкăнри инвалидсене* 2010 çултан пуçласа инвалидноçа пула ěç пенсийě пама тытăнěç. Ун пек правăллă граждансем Шупашкар районěнче 48 çын. Хальхи вăхăтра вěсем уйăхсерен паракан тўлеве кăна илсе тăраççě. Асăннă категорие кěрекен граждансен пенси илсе тăма стаж тата ěç укçи çинчен пирěн пата документсем тăратмалла.

*III ушкăнри инвалид шутланакан, пенси илекен çар служащийěсемпе Тăван çěршывăн аслă вăрçин участникěсен, блокадăри Ленинграда хўтěлеме хутшăннисен* пенси виçи те килес çултан улшăнмалла. Унăн виçи, I тата II ушкăнри инвалидсен евěрех, иждивенецсен шутне кура пулě.

Ачаранпах инвалид шутланакан, 19 çула çитмен, унччен инвалид-ача евěр социаллă пенси илсе тăнисен социаллă пенси илме заявлени пани кирлě мар.

**РФ Пенси фончěн районти Управленийě.**

РАЙОНТА

### Ăçта кайнă резерв фончě?

Кăçалхи çула район бюджетěнче резерв фончě валли 125 пин тенкě пăхса хăварнинчен январь-сентябрь уйăхěсенче 100 пин тенкине тăкакланă. Ăçта кайнă-ха çав укçа?

Резерв фондěнчи укça-тенке пушарта шар курнă уйрăм çынсен çурт-йěрне çěнěрен хăпартма пулăшма уйăрнă. Çав пек укçана Апашри А. И. Иванова тата Н. Г. Николаевăна, Лапсарти Н. Ф. Филиппова, Салапайкассинчи В. И. Васильева, Тавăшкассинчи Б. А. Ананьева, Кўкеçри А. А. Романова 15-шер пин тенкě уйăрнă, Мишерти В. И. Яковлевăна – 10 пин тенкě.

### Аслă Çěнтерěве хатěрленсе

Аслă Çěнтерěве 65 çул çитнине халалласа «Çěнтерў салючě» республика фестивалě иртет. Çавна май Шупашкар районěнчи клуб учрежденийěсенче пултарулăх отчечěсем пыраççě. Иртнě вырсарни кун вара Кўкеçри культура çуртěнче «Çěнтерў салючě» фестивале районти 15 коллектив ран кам хутшăнасса палăртнă. Жюри 22 номер суйласа илнě.

### 10 çырав участокě пулать

Нумаях пулмасть Раççей Федерацийěн Правительствин Президиумěнче халăх çыравне 2010 çулта октябрь уйăхěнче ирттерме палăртнă. Норматива килěшўллěн Шупашкар районěнче 10 çырав, 38 инструктор, 154 шутлав участокě пулмалла. Çыравçăпа ěçлекен пěр çынна 400 çын лекет. Паян районта вăхăтлăх ěçлеме çырав ěçченěсен списокне хатěрлессипе ěçлеççě.

ЯЛ ТĂРĂХĚСЕНЧЕ

### Инвалидсен канашне çěнетрěç

Пěтěм тěнчери инвалидсен кунне Тутаркассинчи культура çуртěнче те паллă турěç. Ача-пăча искусствин шкулне çўрекенсем концерт лартса пачěç.

Тутаркассинче 222 инвалид пурăнать. Вěсенчен 16-шě – çул çитмен ачасем. «Пурнăç пирěн çапла – тěрлě сăлтава пула инвалидсен шучě ўссе пырать. Вěсен пурнăçне çăмăллатас тесе сахал мар ěç тунă, малалла та вěсем çинчен манмăпăр», – терě Тутаркасси ял тăрăх пуçлăхě А. Елимов инвалидсене çирěп вăй-хал суннă май.

Çак кунах инвалидсен выранти канашěн председателне суйларěç. Вăл А. Лукин пулса тăчě. Канаш йышне З. Ивановăна, Л. Емельяновăна, О. Воронцовăна, Л. Васильева, Д. Есипова кěртрěç.

### Толик Хураскисем – вулав залне

Толик Хураски ялěнче пурăнакансен пуху тавраш ирттерме те малтанатарлă вырăн пулман. Халě, вырăнти библиотекăна пысăклатнă хыççăн, çавăн пек май пулě.

Тутаркасси ял тăрăхěнчен пěлтернě тăрăх, библиотека çуртěнчен Перекет касси куçса кайнă хыççăн пушаннă пўлěме юсаса вулав залě валли вырăн хатěрленě. Çак ěçре 13 çын тăрăшнă. Вулав залěнче кěнеке шěкěлчеме кăна мар, ял шайěнчи пěр-пěр мероприяти ирттерес тесен те пухăнма май килě. Çěнě зала Çěнě çул тěлне уçасшăн.

**Г. ЕГОРОВА, В.ИВАНОВА пěлтернě тăрăх.**

Театр тăкăрлăкĕ

# 13 çул хушшинче те йăлăхтарман комеди



**Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче 14-мĕш çул ĕнтĕ «Праски кинеми мăнукне авлантарать» юрăллă-ташăллă камит-мюзикл пырать. Унăн авторĕ – Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А. Чебанов драматург, поэт; спектакле лартаканĕ – СССР халăх артисчĕ, РФ тата ЧР Патшалăх премийĕсен лауреачĕ В. Яковлев.**

Ку спектакльте темиçе те пулнă пулин те спектакле черетлĕ хут лартнă кун каллех театра çул тытрăмăр. Залра пушă вырăнсем çукпа пĕрехчĕ. Мĕн пытармалли – халăх сахаллипе тепĕр спектакль вăхăтĕнче балкон та уçмаççĕ, йăлтах партерта вырнаçаççĕ, вăл та пулин (партер) тулса çитмест. «Праски кинеми мăнукне авлантарать» вара аншлагпа иртрĕ.

Сăмах май каласан, «Праски кинеми мăнукне авлантарать» – «Праски инке хĕр парать» спектакль тăсăмĕ. Авторĕ те, режиссерĕ те вĕсен – пĕр çынсемех. Праски инке те, кинеми пекех, хăйĕн комедийлĕхĕпе халăха тыткăнланă. Чăваш академи драма театрĕн сцени çинче ăна пĕрремĕш хут 1980 çулта лартнă, театрта вăл 16 çул пынă.

Мана, куракана, мĕнпе ытларах илĕртет-ха «Праски кинеми мăнукне авлантарать» спектаклĕ? Чи малтанах – Праски кинеми рольне калăплакан РФ, ЧР халăх артисткишĕн Нина Яковлевăшăн тата унăн мăнукĕн, Макçăмăн, ролĕнчи ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕшĕн Сергей Ивановшăн. Комедин чи вăйлă номерĕ, паллах, – 69-ти Нина Яковлева шпагат çине ларни. Çав саманта халăх кашниннех тăвăллăн алă çупса йышăнать.

1996 çулхи март уйăхĕнче пĕрремĕш хут лартнă спектакльте çав вăхăт таппи те сисĕнет. Комедире ĕç-пуçпа мар-ха, çамрăк чунлă Праски кинеми хăйĕн калаçăвĕнче «анкăл, манкăл, бенс», «сникерс» йышши сăмахсемпе перкелешнишĕн. Ара, ют çĕршывра кăларакан çав çимĕçсем шăпах вăл вăхăтра халăхра сарăлнăччĕ, «Сникерс» та «Марс» йышши шоколадсене каçса кайсах рекламăлатчĕç. Çав вăхăтрах Праски кинеми чăваш ялĕсенчи шур сухалсен сăмаххисемпе туллин усă курать. Кӳрше вăл: «Килте пур-и?» – тесе сăмахласа каçать. Халăх сăмахлăхĕнчи тĕслĕхсемпе комедире анлă усă курнине нумай илсе кăтартма пулать. Паян ун пек сăмахсем лексиконран тухса пыраççĕ. Праски кинеми çулĕнчи инкесем те халĕ спектаклĕнчен урăхларах калаçаççĕ: «Мĕтри Ванчăсене» «Дмитрий Иванч», «лектричествăна» «электричество», «телекрама» «телеграмма» тесе калаççĕ.

Комедире ытарлă сăмах çаврăнăшĕсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе чылай усă курнă. «Каспи тинĕсĕнче хум çĕкленнĕ тет», – тет, сăмахран, Праски кинеми мăнукĕ кӳршĕ хĕрне качча илес умĕн хĕрĕн амăшĕ хирĕç пуласине, çавна май вăрçă-харçă тухассине пĕлсе тăнăран. Тата вичĕ хут каланисем темиçе çĕрте те тĕл пулаççĕ. «Намăссăр! Намăссăр! Намăссăр!» – вăрçать хĕрне Валентина Федоровна (ун ролĕнче – ЧР халăх артистки Валентина Иванова).

13 çул хушшинче халăха йăлăхтарман комеди композиторĕ – ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Ю. Григорьев, музыкине илемлетекенĕ – Р. Семенов, ташшисене Е. Пухов тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ С. Краснова лартнă.

**Вера ЭВЕРККИ.**

## Мĕнле эстрада кирлĕ мар пире?



**АЛЕНА, эстрада юрăçи:**

– Хăтĕрленсе, вĕренсе пысăк сцена çине тухмалла. Чăваш культурине çӳллĕ шая çĕклессишĕн мĕн тума пултаратăп-ха эпĕ – хăв умна çак ыйтăва лартмалла. Музыка пĕлĕвĕ илнисене çеç сцена çинче юрлама ирĕк памалла тенипе килĕшме те пулать. Çапла, çак енпе ятарлă пĕлӳ илнисем юрласан культура шайĕ те самай ӳсет, анчах та кунта тепĕр самант пур. Турă панă чăн-чăн пултарулăх, «самородок» – çак сăмахсем пирки те манас марччĕ. Енчен те вĕсен пĕлӳ çук пулсан сцена çине те тухмалла мар-и-ха ĕнтĕ? Ку ыйтупа кăсăклă самантсем нумай. Ах, çакна сцена çине кăларма чаратпăр-ха тенипе çынна юрлама чараймастăн. Вăл е ку юрăç килĕшнине халăх хаклать. Куракан тăвăллăн алă çупса йышăнать пулсан сцена çине мĕншĕн тухмалла мар?

Ламран-лама

# Эпĕ Шупуççыннине курса юлнă

***Шупуççынни – паллă поэт, литература тĕпчевçи, аслăлăх тата патшалăх ĕçченĕ, Шупашкар енĕн чи мухтавлă çыннисенчен пĕри. Вăл Иккассинче çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, «Нарспи» авторĕн Кĕçтенттин Ивановăн тусĕ пулнă. Шăпи Сталин саманин синкерĕнче айăпсăртан таталнă.***

***Паллă ентешĕ çуралнăранпа 120 çул çитнине Иккассинче анлăн паллă туни пирки «ТЕ» декабрĕн 1-мĕшĕнче çырса пĕлтернĕччĕ. Унччен маларах, ноябрĕн 20-, 24-, 27-мĕшĕсенче, çамрăк поэт тутар чăвашĕсен Çĕнĕ Аксу ялĕнче шкул уçни пирки, ырă ят хăварни пирки аксусен аса илĕвĕсене пичетленĕччĕ.***

***Халĕ вулакансене поэта хăй куçĕпе курса юлнă Иккасси çыннин Ю.Е.МАРКОВĂН аса илĕвне сĕнетпĕр. Юрий Егорович – Тăван Çĕршыв Аслă вăрçин ветеранĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ.***



Н.В.Шупуççынни – пĕрремĕш тĕнче вăрçи сулĕсенче.

Чăвашсен паллă поэчĕ тата общество деятелĕ Николай Васильевич Васильев (Шупуççынни) 1889 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче Иккассинче хресчен çемйинче çуралнă. Иккассинчи икĕ класлă шкултан (çурчĕ халĕ те пур-ха) вĕренсе тухнă хыççăн 1905 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кайса кĕнĕ. Вăл вĕреннĕ класс Раççейри 1905-1907 çулсенчи революци юхăмне ырласа йышăннă, унти ачасем вĕрентӳ ĕçне демократизацилеме ыйтнă. 1907 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче çав класри ачасемпе пĕрле ăна та шкултан кăларса янă.

1907 çулхи кĕркунне ăна И. Я. Яковлев Чĕмпĕр шкулне ĕçлеме чĕнсе илет. Вăл вырăс писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарма хутшăннă. 1909 çулта Чĕмпĕрти гимназире экзамен тытса учитель ятне илет. Çав çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа Тутарстанри Аксу районĕнчи Çĕнĕ Аксури шкулта ĕçлеме тытăнать. 1914 çулта ăна патша çарне илеççĕ, пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă. 1918 çулхи март уйăхĕнче салтак тумне хывать. Çав çулхи ноябрь уйăхĕнче ăна Тукаш вулăсĕн çар ĕç комиссариатне ертсе пыма лартаççĕ. 1919 çулта ВКП(б) ретне тăрать. Кӳкеçпе Шупашкар çывăхĕнчи ялсенче совет влаçĕ йĕркелессишĕн вăй хурать, вулăсри парти организацине ертсе пырать. 1923 çулта ăна Чăваш обкомĕн пичет пайĕн пуçлăхĕ пулма çирĕплетнĕ. 1928 çулта Мускава Çĕр ĕç комиссариатне ĕçлеме куçарнă. 1933 çулта «Сунтал» журнал редакторĕ пулма уйăрса лартнă. 1934 çултан пуçласа Чăваш писателĕсен союзĕн оргкомитетне ертсе пынă.

Вăл çуралнă урама ĕлĕк Шупуç урамĕ тенĕ. Литературăри псевдонимне урам ятĕнчен илнĕ. Ман атте Егор тата вăл, пĕр урамра çуралнăскерсем, пĕрле выляса ӳснĕ, Иккассинчи шкулта пĕрле вĕреннĕ. Аттерен вăл пĕр çул аслăрахчĕ. Иккĕшĕ ялта тĕл пулсан яланах пĕр-пĕрне ятран чĕнетчĕç.

1935 е 1936 çулта вăл яла курма килнине астăватăп. Автомашинăпа. Шоферĕ те пурччĕ. Вăл хăй руль умне ларнине курман.

**МАЛАЛЛИ ÇИТЕС НОМЕРСЕНЧЕ.**

Кашнин хăйĕн пурнăçĕ

# Çулсем иртеççĕ... Пĕчченлĕхре...

Мĕн çуркуннерен пуçласа сĕм кĕркуннеччен канмалли кунсенче ялтан татăлма пĕлмест Лида. Ара, ватă амăшĕ пĕчченех пурăнать те – кил-тĕрĕшĕнче пулăшакан çук. Хальхинче те çула тухрĕ. Автобус хускаличчен чарăнăва самай маларах çитнĕскер иртен-çӳрене сăнаса тăчĕ.

Эрне кун каç яланах çапла: вокзалта халăх кăткă йăвинчи пек хĕвĕшет. Акă, килĕшӳллĕ пĕр мăшăр кассăна пырса билет илчĕ. «Хĕрарăмĕ çамрăк сăн-питлĕ те хĕр пек кĕлеткеллĕ пулсан та çула пытараймăн çав. Упăшки хăйĕнчен 7-8 çулта кĕçĕнрех пулĕ. Ачи вара пĕчĕк. Хĕрарăмĕ ватлăхра çуратнă курăнать», – сăнаса тăчĕ хайхисене Лида. Чим-ха, ку вăл Таня вĕт-ха. Шкулта вĕреннĕ чух питĕ туслăччĕ иккĕшĕ. Кӳршĕллĕ ӳснĕскерсем çăра уран пĕрле чупнă, шкул çулне çитсен пĕр парта хушшинче ларнă, клуба та пĕрле çӳретчĕç. Таня Чĕмпĕр облаçне качча кайнă хыççăн пĕр вăхăтра çыру çӳреткелерĕç-ха вĕсем, унтан темшĕн çыхăну татăлчĕ. «Уйрăлнă-тăр вара упăшкипе… Пăх-ха, мĕнле арçын тупса янă. Тата хĕрĕхрен иртсе ача çуратма шикленмен-ха», – çиçĕмле хăвăртлăхпа пĕтĕмлетӳ турĕ Лида.

Ачалăхри хĕр-тантăшĕпе кĕтмен çĕртен тĕл пулнăшăн савăннине Таня пытармарĕ. Лида та чунтан хĕпĕртерĕ. «Эх, мĕн тери хăвăрт иртет вăхăт. Шкул пĕтерни 25 çул çитрĕ вĕт пĕлтĕр. Эсĕ вара пĕртте улшăнман», – терĕ Лида ачалăхри тусне. «Ну, калаçатăн та эсĕ, Лида. Улшăнман мар çав, улшăнатпăр. Çулĕсем шăваççĕ. Асанне пулса тăтăм мар-и? Мăнукăма тăван яла илсе кайса килесшĕн. Ывăлăм та кукамăшне курма каясшăн пулчĕ те, виççĕмĕр çула тухрăмăр. Хăв эсĕ мĕнле? Хăвăн тата миçе мăнук?» – калаçăва малалла тăсрĕ Таня.

«Мĕн тума çавăн пек ыйтаççĕши пĕрех хут? Çамрăкрах чух миçе ача тесе халтан яратчĕç. Халĕ миçе мăнук теме пуçларĕç», – ăшĕнче пăшăрхансан та кăмăлсăрланнине, чунĕ ыратнине çынсене кăтартмастчĕ Лида. Ачалăхри тус-тантăшĕ умĕнче ăшрине пытараймарĕ вăл, куçĕ те шывланчĕ.

«Çемьеллĕ çынпа çыхланса çамрăк ĕмĕре иртертĕм, Таня. Тăр пĕччен эпĕ. Ни ача-пăча çук ман, ни упăшка. Пĕтĕм чун канăçĕ – ватă анне. Вăл та пулин мана эсĕ пăхатăн-ха, хăвна ватлăхра кам пĕр курка шыв парĕ-ши тесе чуна ыраттарать», – терĕ Лида. Ним калама аптăранă Таня: «Эй, ачисене те пĕлмелле мар! Темле пулĕç ĕнтĕ...» – текелеме çеç пултарчĕ.

Çирĕп хул-çурăмлă Витьăна Лида пĕрре курсах кăмăлларĕ. Чĕлхи тата! Чĕлхи епле! Çу сĕрнĕ тейĕн. «Сан пек чипер хĕр кама качча кайса ыр кăтартĕ-ши? Ма маларах тĕл пулман-ши эп сана? Кун пек чиперккесем пирĕн çине пăхмаççĕ ĕнтĕ», – çирĕм урлă каçса качча çӳресе курманскере сăмах патне кивçене кайман çамрăк арçын сăмахĕсем чунтан хавхалантарчĕç, хăйне çапла калакан, ырлакан-мухтакан арçынпа часах çывăхланчĕ. Каярах вăл Витя çемьеллĕ пулнине пĕлчĕ. Ăнсăртран. Килĕнче яланхиллех пĕчченччĕ ун чух. Пушă вăхта кĕнеке вуласа ирттерекенскер черетлĕ романа шĕкĕлчетчĕ. Алăка такам хăюсăртараххăн шаккани илтĕнсе кайрĕ. Лида алăка уçрĕ те – палламан хĕрарăм тăрать. «Çын упăшкине пит юрататăн пулсан – парнелеме пултаратăп», – терĕ те хайхи урăх пĕр сăмах каламасăр çаврăнса утрĕ.

Çулсем малаллах шурĕç. Лида Витьăпа тĕл пулсах çамрăк ĕмĕрне ирттерчĕ. «Ни хама, ни çынна тенĕ пек пурăнать вăл санпа. Сан хăвăн пурнăçна йĕркелемелле. Ватлăхра ятлăçма та çын кирлĕ. Витьăн пурте пур: арăмĕ, ачисем. Сан вара? Ĕçе каятăн та, ĕçрен килетĕн. Çав эгоистпа вăхăта ирттеретĕн. Арăмĕне пĕрех уйăрлмасть вăл. Санран та мăшкăллать, арăмĕнчен те. Икĕ ухмах хĕрарăма тупнă та...» – ăса кĕртме пăхатчĕ те аппăшĕ, Лида ăша хывас вырăнне кӳренетчĕ кăна тăванне.

Витя, чăнах та, эгоистла тытатчĕ хăйне. Лидăна вĕçĕм тĕрĕслесе тăратчĕ. Витьăна кĕвĕçтерес мар тесе тус-юлташĕсемпе те тĕл пулма пăрахрĕ хĕрарăм. Мĕн пур ува еркĕнĕн пĕччен ирттерме тивни те, чунне йăпатма ачи-пăчи çукки те Витьăна шухăшлаттармастчĕ. Икĕ хутчен хырăм пăрахрĕ Лида. Кашнинчех – Витя сăмахне итлесе тата качча каймасăр ача çуратнă тесе çынсем калаçасран хăраса.

«Сан телефон мар-и?» – тантăшне пӳлсех сăмах чĕнчĕ Таня. «Ой, Витя шăнкăравлать. Эп яла кайнипе кайманнине пĕлесшĕн ĕнтĕ», – тесе часрах телефона ярса илчĕ Лида.

**Ирина ГЕОРГИЕВА.**

ШУПАШКАР ЕН хаҫачĕ
ТĂВАН ЕН
№№ 142-143 (9737-9738) 11 декабря 2009 года Пятница




## Эпир пурте – пĕр тан

Декабрĕн 10-мĕшĕ – Ҫын прависен кунĕ (День прав человека). Ҫак кун 1948 ҫулта ООН (Пĕрлештернĕ Нацисен Организацийĕ) Генеральнăй Ассамблейи Ҫын прависен пĕтĕмĕшле декларацине (Всеобщая декларация прав человека) йышăннă. Ҫак деклараци ҫын прависене пĕр-пĕтĕмĕшле палăртакан пĕрремĕш документ пулса тăнă.

Совет вăхăтĕнче те, халĕ те ҫак куна ытлашшипех паллă тумаҫҫĕ пирĕн ҫĕршывра. Шел пулин те, газпа нефть абстрактлă, куҫа курăнман, укҫасăр ҫын прависенчен хаклăрах. Ҫын пурнăҫĕ пирĕн ҫĕршывра нихҫан та пит шутра пулман-тăр, паянхи кун та – ҫавнашкалах.

Ҫын прависем вĕсем чăн малтанах – уйрăм ҫын прависем. Чылай чухне уйрăм ҫын прависем вăл е ку пĕрлĕх, общество, халăх прависемпе тӳр килмеҫҫĕ. Ун пек чухне вара, кам та пулин хăйĕн тĕрĕс тесе шутлакан прависене вĕҫне ҫитиччен хӳтĕленĕ чухне, истори е пурнăҫ арени ҫинче трагеди хуҫаланать.

Чăваш чĕлхине тата чăваш чĕлхинче калăплашса ӳкерĕннĕ чăваш тĕнчине, чăваш ăс-хакăлне (менталитетне) илес пулсан, шел те, пирĕн чĕлхере «право» текен ăнлав та ҫук. Чылай чухне ҫав ăнлава «ирĕк» сăмахпа палăртма тăрăшатпăр, анчах та «право» тата «ирĕк», ҫывăх пулсан та, расна ăнлавсем.

Ҫын прависен никĕсĕ – пĕртанлăх.

Ҫын прависен пĕтĕмĕшле декларацийĕнчи тĕп шухăшсем паян кун та ҫивĕч янăраҫҫĕ:

«Ҫынсем ирĕклĕ тата пĕр тан ҫуралаҫҫĕ.

Вĕсене ăс-тăн тата совеҫ панă, вĕсен пĕр-пĕрне тăван пек йышăнмалла.

Кашни ҫыннăнах – вăл мĕнле расăран, унăн ӳчĕ мĕн тĕслĕ, вăл хĕрарăм е арҫын пулнине, вăл мĕнле чĕлхепе калаҫнине, мĕнле тĕне ĕненнине, унăн политикăри кăмăлне, вăл хăш нацирен тата социаллă ушкăнран пулнине, вăл пуянран е чухăнран тухнине, унăн укҫи-тенкипе харпăрлăхĕ пурри-ҫуккине пăхмасăр – ыттисемпе пĕр тан, ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман правасемпе ирĕксем пулмалла.

Кашни ҫыннăнах пурăнмашкăн, ирĕклĕ пулмашкăн право пур, ăна никамăн та тĕкĕнме ирĕк ҫук.

Никама та чуралăхра е чура вырăнĕнче тытса усрама юрамасть.

Никама та асаплантарма, тискеррĕн, ҫынсăрла хăтланма юрамасть. Никамăн та тепĕр ҫыннăн тивĕҫне мĕскĕнлетме ирĕк ҫук».

Реклама тата пĕлтерӳсем / Реклама и объявления

**Сутаҫҫĕ** Продаем

**8-39.** Продаю керамзитобетонные блоки, кирпич, цемент. Доставка. Т.: 48-68-95; 8-906-131-52-63.

**Туянаҫҫĕ** Купим

**11-90.** Корову, бычка, телку. Т.: 8-905-342-39-43.

**Пулăшу** Услуги

**12-9.** Изготовление на заказ: двери филенчатые, окна, балконные рамы из дерева. Замер, доставка. Т.: 8-905-342-66-08.

**11-126.** Льготные займы на подготовку к свадьбе, юбилею, покупку детского приданого и оплату обучения. Пос. Кугеси: 8-927-995-03-42, с. Ишлеи: 37-47-25.

**Тĕрлĕрен** Разное

**11-56. Ремонт холодильников на дому. Гарантия. Т. 8-905-345-06-48.**

*Стоимость 1 знака в строчных объявлениях в разделе «Земельные отношения» – 1,50 руб. для физических лиц и 2,50 руб для юридических лиц, в других разделах – 1 руб. для всех.*

**Ҫĕр лаптăкĕсем** Земельные отношения

**12-35. Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0690 га с кадастровым номером 21:21:160135:92, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Карла Маркса (земли населенных пунктов), для огородничества. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**12-34. Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0273 га с кадастровым номером 21:21:100901:289, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Микши-Энзей, ул. Ленина (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**12-32. Предполагается** предоставление в аренду в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,1000 га с кадастровым номером 21:21:150102:33, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Лапсары, ул. Луговая, д.22 (земли населенных пунктов), для индивидуального жилищного строительства. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**12-28. Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0700 га с кадастровым номером 21:21:160202:42, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоршелская (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**12-31. Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1540 га с кадастровым номером 21:21:070601:42, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Аркасы (земли с/х назначения), сроком на 11 месяцев для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского ра-йона. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**12-33. Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,1799 га с кадастровым номером 21:21:180503:46, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Тренькасы, (земли с/х назначения), для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений. ***Адрес: п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-50-77.***

**13 декабря около ТД «Дорожник» (Кугеськский рынок) – продажа поросят с 14.00 часов** 12-19.

**Керамзитобетонные блоки пропаренные 20х20х40, перегородочные 12х20х40, цемент, песок, гравий. Т.: 8-903-346-22-93, 8-905-028-41-30.** 11-19

**РЕКЛАМА тата ПĔЛТЕРӲСЕМ: (83540) 2-13-80, (8352) 67-47-02.**

Администрация Сирмапосинского сельского поселения выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с безвременной кончиной **Георгия Федоровича ЗАХАРОВА.** 12-38

Кун йĕркинче

# Приватизаци вăхăчĕ иртсе пырать

**ВĔҪĔ. ПУҪЛАМĂШĔ** 1 стр.

Законсене пăхсан, ордерти ҫав ҫыннăн прописка ҫуккине кура приватизацие хутшăнма ирĕк ҫук тейĕн. Ҫав вăхăтрах кашни ҫыннăнах приватизацие хутшăнма ирĕк пур. Ҫакăн пек ăнланманлăха республикăн Верховнăй сучĕ ҫапларах уҫăмлатнă: енчен ҫын регистраци учетĕнчен тухса урăх ҫĕре пурăнма куҫса кайнă, анчах малтанхи адреспа ордерта пĕрех шутланса тăрать пулсан, приватизацие хутшăнма унăн ирĕк пур. Анчах ҫав ҫын урăх ҫĕрте приватизацие хутшăнман тата приватизацие вăл хутшăннине ҫемье членĕсем хирĕҫ мар пулсан.

Общежитинче койко-вырăн йышăнакансем пирки те уҫăмлăх пур. Пĕрле пурăнакансем хăйсен хушшинче калаҫса татăлса пӳлĕмри койко-вырăнсене приватизацилеме хирĕҫ мар пулсан, приватизаци правипе усă курма пултараҫҫĕ.

Ҫул ҫитменнисем те приватизацие хутшăнма пултараҫҫĕ. Анчах кунта ҫул ҫитменнисем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле приватизаци пайне кĕни пирки мар. Сăмах – приватизациленĕ ҫурт-йĕр хуҫи ачасем пулса тăрасси пирки. Ҫул ҫитменнисен ячĕпе килĕшӳве урăх ҫыннăн ал пусмалла. Ун валли ашшĕ-амăшĕ панă шанчăк хучĕ (доверенность) кирлĕ.

Ҫемье членĕсенчен пĕри хăйĕн приватизаци правипе усă курасшăн мар пулсан, вăл хăйĕн пайне ҫемье членĕсенчен хăшне те пулин пама пултарать.

### Документсем пулмасан

Кирлĕ документсем пулмасан та ытлашши пăшăрханса ӳкме кирлĕ мар. «Эпир е ордер, е социаллă найма килĕшĕвĕ (договор) ыйтатпăр. Вăл та, ку та ҫук чухне прописка пуррине шута илетпĕр», – тесе пĕлтерет БТИ директорĕ Н. Н. Ермакова.

| Ял тăрăхĕсем | Приватизацилемелли ҫурт-йĕр хисепĕ | Приватизациленĕ | Приватизацилеме пуҫланисем |
|---|---|---|---|
| Апаш | 31 | 9 | – |
| Шемшер | 12 | 10 | – |
| Тутаркасси | 1111 | 562 | 55 |
| Атайкасси | 185 | 101 | 9 |
| Вăрман Ҫĕктер | 285 | 154 | 15 |
| Ишек | 71 | 68 | 1 |
| Ишлей | 882 | 478 | 65 |
| Кӳкеҫ | 2740 | 1624 | 109 |
| Кăшавăш | 227 | 103 | 5 |
| Лапсар | 257 | 118 | 25 |
| Сарапакасси | 118 | 65 | 3 |
| Ҫĕньял Покровски | 59 | 21 | 3 |
| Ҫĕньял | 196 | 105 | 3 |
| Ҫырмапуҫ | 53 | 20 | 5 |
| Чăрăшкасси | 8 | 4 | – |
| Шĕнерпуҫ | 526 | 276 | 32 |
| Янăш | 14 | 2 | 6 |
| Районĕпе | 6775 | 3720 | 336 |

Нумай хваттерлĕ ҫуртсен техпаспортсем ҫуккипе те чăрмавсем сиксе тухаҫҫĕ иккен. Вăл документа хăй вăхăтĕнче муниципалитетсен заказ памалла пулнă.

Ҫурт-йĕре перепланировка тунисене БТИ документсене йĕркене кĕртме ыйтать.

Приватизацилеме тăрсан хваттер укҫи тӳлесе пымanni те приватизацилеме тăрсан ура хурать, мĕншĕн тесен ҫурт-йĕре пăхса тăракан управляющи компанисем БТИ валли лицевой счетран выписка памаҫҫĕ.

### Хутшăнас тесен

Хваттер приватизацийĕ валли документсен спискĕ:

1. БТИне ордерпа е социаллă найм килĕшĕвĕпе кайса хваттерĕн техпаспортне тума заказ памалла. Ҫав документа хатĕрлеме икĕ уйăх иртсе каять.

2. Хăвăр ҫуртăра пăхса тăракан управляющи компание кайса лицевой счетран выписка илмелле.

3. Вещнăй право реестрĕнчен выписка илмелле. Ăна БТИнчех параҫҫĕ.

4. 1991 ҫул хыҫҫăн Шупашкар районĕсĕр пуҫне урăх ҫĕрте прописка тăнисен хăйсен малтан пурăннă вырăнтан справка илмелле. Унта эсир маларах прописка ăҫта тăнине тата мĕн чухлĕ пурăннине, приватизацие хутшăнманнине кăтартни кирлĕ.

5. Паспорт, ачасем ҫуралнi ҫинчен ĕнентерекен хут.

6. Документсене хатĕрлеме – укҫа.

Сиксе тухакан мĕн пур ыйтупа БТИне ҫитсе килĕр, унта сире тĕплĕнрех ăнлантарса парĕҫ.

**В.ЭВЕРККИ.**

Шӳтлесе те чăнласа

## Вытрезвителе ҫапла лекрĕм

Тăван пичче юнашар районтан Самуккассине хăнана килчĕ. Ну, савăнтăм та, савăннипе лешне ҫине-ҫинех янă. Тăван ялне, шăллĕне курнăран хăй те хĕпĕртенĕ, янк! та янк! тутарать. Артист пек юрлать, кӳршĕ-арша тĕлĕнтерсе хăварчĕ. Хĕвел анăҫалла сулăнсан чӳречерен пăхса илтĕм: хăнана ҫула ăсатмалла.

Автобус ял вĕҫне пырса чарăнакан ҫĕре тухрăмăр. Пичче: «Эх, мороз, мороз, не морозь меня...» – тесе тăстарнă хушăра хыҫра такам: «Счас мороз мар, жарко будет!» – терĕ. Иксĕмĕр те ҫаврăнса пăхрăмăр. Умра – милици. Иккĕн. Питĕ чиперсем хăйсем. Пĕри ман пиччене хулĕнчен ярса илчĕ те милици машинине чышса кĕртме хăтланчĕ. Ман пичче кĕмерĕ, вăкăр пек мĕкĕрсе ячĕ. «Кама илсе касшăн?! – терĕ. – Хирурга штоли? Эп паян ирхине кăна операци туса тухрăм. Мĕн, ун хыҫҫăн та ҫĕр грамм ĕҫме юрамасть-им? Хорошо, эсир те лекĕр-ха пĕррехинче ман пата. Мана паян урăлтаркăча ăсатсан сирĕнне ăҫтан мĕн касса илмеллине асра тытсах пурăнăп...»

Ҫав самантра хĕрлĕ кăсăруклисен пичĕ хăмла ҫырли пек хĕрелсе кайрĕ, куҫĕсем ҫамки ҫине хăпарса ларчĕҫ. Вара ĕмĕр тăршшĕпех водительте тар тăкакан пиччене хулĕнчен ҫавăтса автобуса кĕртсе лартрĕҫ. Тинех эп лăштах пулнăччĕ. Йăпăрт-япăрт айккинелле пăрăнма ĕлкĕрнĕччĕ кăна – хулран кап! ярса тытрĕҫ лешсем, пакунлисем. Ҫапла урăлтаркăча лекрĕм, унта ҫĕр касрăм, штраф тӳлерĕм.

**Н. ПОРФИРЬЕВ,**
**Самуккасси.**

## Саламлатпăр!



*Атăльялта пурăнакан Лидия Петровна СВИДЕРСКАЯНА декабрĕн 10-мĕшĕнче 76 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, ăшă кăмăл, канлĕ ватлăх сунатпăр.*

*Н. АНТОНОВА, Ю. ТОЛСТОВА, Р. КУДРЯШОВА.*

12-26

*Кивçурт Марка ялĕнче пурăнакан Максим Германович АЛЕКСАНДРОВ декабрĕн 11-мĕшĕнче 20 çул тултарчĕ. Çывăх вăхăтрах унăн йышнăшĕ Комсомольски районĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Евгений Николаевич Рубцов та çуралнă кунне паллă тăвать. Эпир вĕсене чун-чĕререн саламлатпăр. Телей, ырлăх-сывлăх, юрату сунатпăр. Яланах ырă та чунăрсемпе çамрăк юлăр.*

*АШШĔ-АМĂШĔ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ, ЕВГЕНИЙĂН МĂШĂРĔ.*

12-37

## Налог тавра

### Январĕн 1-мĕшĕччен ĕлкĕрмелле

**Тулли мар явапллă обществăн (ООО) уставне çĕнĕрен регистрацилеттерме налог органĕсене мĕнле документсем тата хăш вăхăтра тăратмалла?**

*Ыйтăва Федераллă налог служби районсем хушшинчи 5-мĕш инспекцийĕн пуçлăхĕ Анатолий КУЗНЕЦОВ хуравлать:*

– РФ Гражданла кодексĕн пĕрремĕш пайне тата Раççей Федерацийĕн хăш-пĕр законодательстве акчĕсене улшăну кĕртесси çинчен пĕлтĕрхи декабрĕн 30-мĕшĕнче йышăннă 312-мĕш федераллă законпа килĕшÿллĕн, 2009 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен регистрациленĕ ОООсен хăйсен уставĕсене çĕнĕрен регистрацилеттермелле. Çак ĕçе 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен туса ĕлкĕрмелле.

Налог органне Р13001 №-лĕ заявлени çырмалла, учредитель документĕсене улшăну кĕртесси çинчен тунă йышăну тата çав улшăнусене, çавăн пекех госпошлина тÿлени çинчен документ тăратмалла.

## Йĕркелĕх хуралĕнче

### Така хакĕ – 100 тенкĕ

Кĕтÿ пăхасси çăмăл ĕç мар, хĕвелпе пĕрле вăранса тухса каймалла та таврана кас сĕмĕ çапсан каялла таврăнмалла. Апла пулин те Куснарта пурăнакан 27 çулти çамрăк çак ыйăрлăхран хăраман, яваплă ĕçе пуçăннă. Ахальтен мар иккен, ара вăл хăйне паракан кĕтÿç укçине илнисĕр пусне пуймалли тата тепĕр лайăх меслет шутласа тупнă. «Июнĕн 7-мĕшĕнче А. Сильвестров ял кĕтĕвне кĕтнĕ чухне хире унăн тăванĕ пырать. А. Федорова шашлăк валли така кирлĕ пулса кайнă. Кĕтÿç нумай шутласа тăмасть, ал айне лекнĕ пĕр такана 1500 тенкĕлĕх сутса ярать. Тавар туянакан ăна 100 тенкĕ парса хăварать, ытти суммăна каçхине пама пулать. Кĕтÿ яла килсен Куснарти С. Константинов хăйĕн такине кĕтсе илеймест, ыйтăва уçăмлатма кĕтÿç патне каять. А. Сильвестров нумай турткалашса тăмасть, така ăçта çухалнине каласа кăтартать», — пĕлтерчĕ районти прокурор çумĕ А. Иванов. Милици сотрудникĕсем тÿрех така туянакан патне пыраççĕ, анчах та... Такаран мăйраки те тирĕ, урисем çеç тăрса юлнă. Прокурор çумĕ С. Марасанов судра А. Сильвестрова уголовлăй майпа 158-мĕш статьяри 1-мĕш чаçĕпе айăплама, 100 сехет ĕçлеттерме ыйтать. Шупашкар район суччĕ патшалăх айăплавçипе килĕшет, унăн ыйтăвне вăйра хăварать.

**А.СУСМЕТ.**

### Мăкăнь пухнăшăн пуçран шăлмаççĕ

Район прокурорĕн çумĕ А. Иванов пĕлтернĕ тăрăх, Шупашкарта пурăнакан Э. Самарин Уголовлăй кодекс мĕн иккенне малтан та пĕлнĕ – суд ăна 228-мĕш статьяпа айăпланă. Анчах вăл кун хысçăн та тăна кĕрес темен, каллех закон урлă сиксе каçма шутланă. Хальхинче ăна милици сотрудникĕсем Шупашкар районĕнчи сад участокĕсенче мăкăнь пухнăшăн тытса чарнă. Халĕ 35 çулти арçыннăн августăн 10-мĕшĕнче Шупашкаркассине мĕншĕн пынине сÿтсе явма вăхăт пур – суд ăна условнăй майпа 1 çул та 6 уйăха айăпланă.

**А.АРДАЛИОНОВА.**

## Пуç ватмалăх



**Сылтăмалла:** 5. Пыйтă çăмарти. 7. С. Павловăн «Сĕлкĕш» романĕнчи хĕр сăнарĕ. 8. Н. В. Шупуççыни сăвви. 9. Савăт-сапа содăпа лайăх ...лать. 13. Пулла улталамалли хурт-кăпшанкă. 15. Пенси лекен I ушкăн ...чĕ. 16. Ыйтусем сырнă хут. 17. Шупашкар районĕнчи Свердлов ячĕллĕ хуçалăх ертÿçи. 19. Иккĕмĕш çăкăр (диалект). 20. Платникăн ĕç хатĕрĕ. 22. Лезгинка ташăра çухăрни. 26. Шупашкар районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ерÿçи. 27. Нумай та пĕтет, ... та çитет – пĕрле пурăннине мĕн çитет. 28. Хура тинĕс хĕрринчи курорт хули.

**Аялалла:** 1. «Пурнăç çинчен шутлас мар, **...** ĕçне манас мар» (...çапакансен юрри). 2. Пĕр ... çумăр çурĕ. 3. Тюбикри «Момент» та, ПВА та. 4. Ăна çăкăр пĕçерме çăраççĕ. 6. Тропикри шултра çимĕç. 10. Юрий ... – ЧР халăх артисчĕ, Чăваш оперăпа балет театрĕн солисчĕ.11. ... Тăрăн – Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи ял. 12. Ăна йытă çимен апат теççĕ. 14. Ишлей ял тăрăхĕнчи Вениамин Рязанов ял хуçалăх наукисен кандидачĕ, Чăваш ял хуçалăх академийĕн доценчĕ çуралса ÿснĕ ял. 18. Чăрăшкасси ял тăрăх пуçлăхĕ. 21. ... çур çĕр авăтать, ларнă çĕрте çывăрать. («Нарспи» поэмăран). 23. Надежда Степанова ... – «Спорт – сывлăх çăл куçĕ» кĕнеке авторĕ. 24. ...-капла ан хăтланнă пултăр! 25. Утсем çивĕч, çуни ... , юрттарар-и киле май (фольк).

**В. ПЛАТОНОВ (Шоркка) хатĕрленĕ.**

**ПУÇ ВАТМĂШ ХУРАВĔСЕМ**

**Сылтăмалла:** 5. Шăрка. 7. Лисук. 8. «Савнине». 9. Таса. 13. Ăман. 15. Инвалид. 16. Анкета. 17. Пушкин. 19. Паранкă. 20. Сава. 22. Асса. 26. Пахомов. 27. Сахал. 28. Анапа.

**Аялалла.** 1. Чăпта. 2. Касă. 3. Клей. 4. Чуста. 6. Ананас. 10. Свинцов. 11. Анаткас. 12. Пирускă. 14. Матикас. 18. Павлов. 21. Автан. 23. Силпи. 24. Алпа. 25. Аван.






## СЫВЛĂХ

### Шăл ыратать...



Ыратакан шăл çине ут кăшкар çулçине хумалла.

Хăвăлланнă шăл канăç памасть – хăвăла çĕмĕрт хумалла.

Сухана вĕтетмелле, марльăпа чĕркемелле, ыратакан шăл енчи хăлха шăтăкне хумалла. Ыратни çур сехетрен иртет. Шăнăр куракĕ те (подорожник) çакнашкал витĕм кÿрет.

Пĕр шăл ыхрана вĕтетмелле, марльăпа чĕркемелле те ыратакан шăл енчи мар, тепĕр енчи ал юн таппи çине хурса çыхса лартмалла. 20 минут тытмалла.

Ыратакан шăл çине сив куракĕн (цикорий) чĕрĕ е типĕ чечекне хурсан вăл лăпланать.

**Ÿслĕкрен**

● Пĕр виçепе илнĕ вĕтетнĕ сухана, пан улмие тата пыла хутăштармалла. Кунне виçĕ хутчен пĕр апат кашăкĕ çимелле.

● Çарăкăн варрине кăларăр та унта сахăр е пыл хурăр. Талăкра пухăннă шĕвеке кунне пĕр апат кашăкĕ ĕçĕр.

● Çывăрас умĕн кăкăра сысна çалипе сĕтăрăр, ăшă çăм кĕпе тăхăнăр.

### Кăкăр хĕртни антăратсан

Час-часах çийĕр, анчах нумай мар. Кунне 5-6 хут çисен хырăмлăх кунран кун кислота сахалрах кăларать. Çинĕ вăхăтра нумай ĕçĕр. Вăл апат пырĕнчен хырăмлăх сĕткенне тасатса антарать. Хăш-пĕр çимĕç – шоколад, пĕтнĕк (мята), сухан, цитруссем, кофе, ăшаланă, çуллă çимĕç – апат пырĕн лăймакине йĕклентернипе кăкăр хĕртме тытăнать. Хăш чухне темиçе сыпăм сĕт ĕçсенех иртсе каять. Анчах та ку пĕрмаях пулсан вырăн пуçне 15 сантиметр таран çĕклĕр. Ун чухне хырăмлăх сĕткенĕ апат пырне лекмест. Енчен те сирĕн тÿрĕ çывăрмалла пулсан сылтăм аяк çине выртăр.



## КИЛТИ ХУÇАЛĂХ

### Никĕс çурăлсан

**Кăçал çуртăн никĕсне ятăм. Çитес çул стена купалас тетĕп. Никĕс ан çурăлтăр тесен мĕн тумалла?**

**Г. ВАСИЛЬЕВА.**

Никĕс ытларах чухне унăн айĕнчи тăпра шăннипе пулать. Нÿрлĕ тăпра шăнсан унăн калăпăшĕ ÿсет. Тăпра мĕн чухлĕ нÿрĕрех, çавăн чухлĕ çÿлерех хăпарать. Вăл çĕр çийĕн условийĕнчен тата никĕс çине тивекен пусăм вăйĕнчен те килет. Вăй мĕн чухлĕ пысăкрах, çавăн чухлĕ сахалрах хăпарать.

Вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнмасан çурт ишĕлсе анма та пултарать. Çавăнпа та никĕс айĕнчи тата çумĕнчи тăпрана йĕпенесрен те, шăнасран та сыхламалла. Никĕс валли чавнă шăтăка шыв юхса ан кĕтĕр тесен айккинчи хăвăл вырăнсене тăпра чышса пусăрăнтармалла. Ăна сийĕн-сийĕн хумалла. Унăн хулăнăшĕ 150-200 мм ытла пулмалла мар. Юр тата çумăр шывне çурт таврашĕнчен юхтарса яма çĕре тайлăк тумалла, шыв кÿлленсе тăрасран ăна тата лайăх тикĕслемелле. Никĕс айĕнчи тăпра шăнасран хĕл пуçланас умĕн ăна йĕри-тавра тăпрапа, ăшă тытакан материалпа е юрпа витмелле. Çак ĕçре пăчкă кĕрпипе, шлакпа, улăмпа та усă курма юрать.

### Лайăх çатма – тутлă çимĕç

● Çĕнĕ çатмана çунă хыççăн ÿсен-тăран çăвĕпе сĕрсе хумалла.

● Çатмапа усă курма ятарлă йывăç е тефлон кашăк туянăр – çунасран витнĕ сий чĕрĕлмест.

● Çатмана çулăм варрине лартмалла, вăл пĕр пек хĕрсе пытăр. Вĕри савăта нихăçан та сивĕ е ăшă шыв айĕнче ан тытăр – çунасран витнĕ сий юрăхсăра тухать. Çавăн пекех пушă е çупа сĕрнĕ çатмана та нумай хĕртме юрамасть.

● Щетка пирки манăр. Çатмана хытă щеткăпа, порошокпа çумаççĕ. Çумалли шĕвек хатĕрпе çеç усă курмалла.



Иртнĕ вăхăт

# Тыл ĕçченĕсем



Çак сăн ÿкерчĕке 60 çул каялла ÿкернĕ. Кусем – Куйбышев ячĕллĕ колхозри пахча çимĕç бригадин ĕçченĕсем. Пурте тенĕ пекех вĕсем «1941-1945 çулсенче ĕçре палăрнăшăн» медале тивĕçнĕ. Пирĕн колхоз çав çулсенче патшалăх умĕнчи плана пур енчен ирттерсе пурнăçланă.

Малти ретри (сулахайран) Лаврентий Степанович хуралçă, тепĕр арçынни (варринче) – Семен Андреевич бригадир.

**Л.ПАВЛОВ,**
**Чăрăшкасси ялĕ.**

## Концерта кайма билет çĕнсе ил!

**ЫЙТУ** – Чăваш эстрада çăлтăрĕ Алексей Московский миçе тата мĕн ятлă альбом кăларнă?

**ПАРНЕ** – Чи малтан тĕрĕс те туллин хуравлакана Алексей Московскийĕн декабрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарти Трактор тăвакансен керменĕнче иртекен концертне каймалли билет.

**ХУРАВСЕНЕ 2-13-80 номерпе ытлари кун декабрĕн 15-мĕшĕнче 15 сехетрен пуçласа 16 сехетчен çеç йышăнатпăр.**

## Иртнĕ конкурс çĕнтерÿçисем

**Ыйтăва тĕрĕс хуравлакан пулмарĕ.**

### Театра кайма билет çĕнсе ил!

Республикăри театрсен «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурсĕнче «Тăм тивнĕ чечексем» спектакльте тĕп роле выляканн О. Почалкина «Чи лайăх хĕрарăм ролĕ» номинацире, О. Ерикова художник «Чи лайăх художник» номинацире палăрнă.

### Концерта кайма билет çĕнсе ил!



**Нина АНАНЬЕВА, студент, Шупашкар.**

Алексей Московский пĕрремĕш хут сцена çине «Каçарсам» юрăпа тухнă. Пĕрремĕш дуэт унăн Алексей Шадриковпа пулнă.


**Сегодня вышел**
**двадцать третий номер**
**приложения на русском языке**

КУГЕСИ плюс (ТĂВАН ЕН)

**Перепись – не за горами**
*Вспоминая результаты переписи населения прошлых лет, работники Чувашстата строят планы на будущее*

**Мудрая тёща или свекровь – явление редкое**
*О том, как неплохая тёща невольно усложнила жизнь сильному мужчине*

**Пиротехника – сочетание праздника с бедой**
*Что важно знать людям, чтобы перед Новым годом не повторить трагическую судьбу пермяков из клуба «Хромая лошадь»*

**Кугеси плюс.**
***Новости с пригородным акцентом .***


Шÿтлесе те чăнласа

## Ларакан машина кама чăрмантарнă?

Кунран-кун çĕнĕ информаци илтетпĕр, тĕлĕнтермĕш пулăм та сиксе тухать. Акă, нумаях пулмасть пĕр ирхине тутаркассисем те хваттерсенчен урама тухсассăн тĕлĕннипе пĕççисене çеç çапрĕç. Тăвата уралла туссен хуçисем вара çăвара карса пăрахнисĕр пуçне пуçĕсене те самай хыçрĕç. Вĕсем валли хальлĕхе тупса палăртман çынсем пысăк «парне» хатĕрленĕ – машинăсен ураписене шăтарса хăварнă. Кам подъезд умне хăйĕн транспортне лартнă, пурин те ураписем шăтăк. Камăн тăвата урапи те, камăн икĕ урапи анса ларнă. Пулнă-пулнă, Тутаркассинче темле пулăм та пулнă, анчах кунашкалли пулманччĕ-ха. Уçă тÿпе айĕнче ларакан машинăсем кама чăрмантарнă-ши? Çак «ырă» ĕçе çĕрле тутлă ыйха татса пурнăçлама камăн кăмăл пулнă-ши? Тутаркассисен çак ыйтусене уçăмлатас тесен самай тар тăкма лекĕ.

**Г. ЕГОРОВА, ЧППУ студентки.**

Усал хыпар

● **21-МĔШ ĔМĔРТИ МĂНУКСЕМ УСАЛЛАНАÇÇĔ.** Ватăран куличчен йытăран кул теççĕ халăхра. Çак каларăша шкулта вĕрентнĕ чухне Шорчекассинчи 20 çулти каччă урокра ларман пулмалла, ахăр. Вăл декабрĕн 4-мĕшĕнче хăйĕн 62 çулти асламăшĕ çине алă çĕклет.

● **ХАКА КАЙСА ЛАРНĂ «ROLSEN».** «Телевизор туянса мĕншĕн укçа пĕтерес?» – çапла шутланă пулмалла Кÿкеçри пĕр общежитинче пурăнакан 35 çулти арçын. Декабрĕн 4-мĕшĕнче унăн пуçне «лайăх» шухăш пырса кĕрет – çак общежитинчи 25 çулти çамрăк пÿлĕмĕнче телевизор пур вĕт. Алăк уçса телевизор вăрланăшăн халь явап тытмалла.

## Çăлтăрсене ĕненсен

### Эрнелĕх гороскоп. Декабрь, 14 - 20

21.03-20.04 **Сурăхсен** пурнăçĕ тĕпрен улшăнма пултарать. Юратнă çын пĕрлешме ыйтĕ. Сывлăх пирки манмалла мар – шăнассинчен сыхланăр.

21.04-21.05 **Вăкăрсен** май килнĕ таран çынсемпе паллашмалла. Вĕсен хушшинче мăшăр пуласси те тупăнĕ. Производствăри çивĕч ыйтусене те татса паратăр.

22.05-21.06 Юратнă çынпа хутшăнусем начарланнă пулсан **Йĕкĕрешсен** шăпах ку эрнере ларутăрăва уçăмлатма май килĕ. Ют чĕлхене вĕренме пуçлани пăсмасть.

22.06-22.07 **Раксен** эрне пуçламăшĕнче хаклă япаласем илмелле пулĕ. Юлашки вăхăтра эсир хăвăр çинчен нумай шутлатăр, çавăнпа та карьера пирки аса илме вăхăт.

23.07-22.08 **Арăслансене** ăнăçу çеç кĕтет. Юратура – питĕ чаплă, ĕçре ĕçтешсем пĕр-пĕрне ăнланаççĕ, çемьере те хирĕçÿ пулмасть. Канмалли кунсене тăвансемпе ирттерĕр.

23.08-22.09 **Хĕрсен** малтанхи кÿренÿ пирки манмалла. Партнерсемпе хутшăнусем лайăхланĕç.

23.08-23.10 **Тарасасен** пурнăçа улăштарас килсен юратнă çынпа малашнехи хутшăнусем пирки калаçмалла. Калаçу эсир шутланă пекех пулмалла.

24.10-22.11 **Скорпионсен** пурнăçĕнче улшăну пулĕ: юратнă çынна урăх çĕрте ĕç сĕннипе пурăнмалли вырăна та улăштармалла килсе тухĕ. Лайăххипе начаррине висĕр.

23.11-21.12 **Ухăçăсен** уçăмлă пулмалла. Ĕçре хирĕçÿрен пăрăнса иртмелле. Канмалли кунсенче юлташсене хăнана чĕнĕр.

22.12-18.01 Темле йывăр пулсан та **Ту качакисен** лайăххине шанмалла. Юратнă çынпа хирĕçни вăраха тăсăлмĕ. Ĕçре çĕнĕ должность сĕнме пултарĕç.

19.01-18.02 **Шывтăкансен** ку эрнере хирĕçекенсене мирлештермелле пулĕ. Юн кун тата кĕçнерни кун ĕçре çитменлĕхсем пулĕç.

19.02-20.03 **Пулăсен** ĕçе çемьерен мала хумалла мар, унсăрăн хутшăнусем япăхланасси те инçе мар. Сывлăх çинчен ан манăр. Килтисенчен ытлашши çирĕп ыйтмалла мар.

Чăвашла-вырăсла

### ĔЛĔКХИ ÇИ-ПУÇ

Кĕштек – ластовица
Сарă – поясное украшение
Хултăрмач – вышивка на рукаве
Масмак – налобная повязка
Тевет – перевязь через плечо
Ама – нагрудное украшение



**Сурпан – головной убор**

Култараççĕ

*Упăшки киле вирхĕнсе пырса кĕрет. Арăмне ыталать, чуп тума пуçлать, вăл та хирĕç чуп тăвать. Упăшки:*

*– Халь кала, мăйăхсăр (усы) еплерех эпĕ?*

*– А... эсĕ пултăн-и-ха ку? – тет арăмĕ пăшăрхануллă сасăпа.*

☺ ☺ ☺

*– Сирĕн арăмăн нерв чирĕ хăрушах мар. Кун пек неврозпа çынсем нумай пурăнаççĕ.*

*– Эпĕ вара, тухтăр, хăçанччен пурăнăп?*



В. Семенов ÿкерчĕкĕ.


ТĂВАН ЕН
(Край родной)
Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики

**Учредители:**
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
АУ ЧР «Редакция газеты «Тăван Ен»

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13

Гонорар выплачивается только за материалы, написанные по заказу редакции.
Рукописи не возвращаются и не рецензируются.
Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции.
За достоверность материалов ответственность несут авторы.
За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор – 2-12-61, отделы: новостей и общественной жизни – 2-13-80, экономической жизни – 2-21-88, местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы – 2-21-88, бухгалтерия – 2-12-59, прием объявлений и рекламы, подписка – 2-13-80. Факс: (83540) 2-12-59. E-mail: tavan-en21@yandex.ru. Сайт: www.tavan-en.cap.ru.

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также опубликованные в рубрике "Саламлатпăр", публикуются на платной основе.


© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещено.


Газета выходит по вторникам и пятницам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

**Гл. редактор Б. Б. ЧИНДЫКОВ**
**Дежурный по номеру**
**В. Т. ИВАНОВА**

Печать офсетная. Объем 2,0 печ. л.
Номер подписан в печать: 10.12.2009 г. в 15 час. 00 мин.
Тираж 2317. Заказ №
Индекс газеты – 54820
Номер отпечатан в ГУП ЧР «Цивильский издательский дом« Минкультуры ЧР, г. Цивильск, ул. Просвещения, д. 41